25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАЙ 7 КĔÇНЕРНИКУН 104 (6039) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Чăваш Коммуни

Шкул ачисен пĕлӳ тĕрĕслевĕсене тĕплĕн хатĕрленсе ирттерессишĕн

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче шкулсем отечественнăй аслă вăрçăн йывăр условийĕсенче ĕçлерĕç. Чăваш шкулĕсенче вĕренӳ ĕçне çĕнĕ самайла йĕркелеме пулчĕ, кашни шкулсенче учительсем çитмесен те пулнă. Анчах шкул коллективĕсем, учительсем [illegible]

[illegible] шăпах.

Отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче совет ачисем политика, идея тĕлĕшĕнчен ӳсрĕç. Вĕсем хăйсен социализмлă тăван çĕршывне тата ытларах хаклама вĕренчĕç.

Халĕ шкулсем вĕренӳ çулĕн питех те ответлă тапхăрĕ умĕнче тăраççĕ. Майăн 21-мĕшĕнче пур шкулсенче те пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланмалла. Тĕрĕслевсем IV-мĕш класран пуçласа пур классенче те иртмелле. Пĕлӳ тĕрĕслевĕ туса ирттермелли предметсен хисепне кăçал тăван чĕлхе, вырăс чĕлхи тата математика кĕреççĕ. 10-мĕш [illegible]

[illegible] тивĕçлипе пулăшса пымаççĕ. Чăн та, халь пирĕн пĕтĕм çĕршыв чи малтан тăшмана çĕнтерессишĕн ĕçлет, пĕтĕм вăя фронта пулăшас ĕçе хурса пырать. Анчах ачасемшĕн тăрăшасси, вĕсене тивĕçлĕ воспитани парасси те пирĕн çĕршыв умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Шкул ачисен пĕлӳне тĕрĕслес ĕçе тĕплĕн ирттерсе вăрçăн йывăр условийĕсенчи вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлесси — шкулсем, партипе комсомол организацийĕсем, советсем тата пĕтĕм общественность умĕнче тăракан черетри задача пулса тăрать.

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составĕнчи аялта асăннă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званийĕсене парас:

АВИАЦИ ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЗВАНИНЕ

Александр Евгеньевич **Голованова.**

АВИАЦИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

Евгений Федорович **Логинова**

Николай Иванович **Новодранова**

Марк Иванович **Шевелева.**

ИНЖЕНЕРНО-АВИАЦИОННĂЙ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Иван Васильевич **Маркова.**

ИНТЕНДАНТСКИ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ

Александр Иванович **Любимова.**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 çулти майăн 5-мĕш.

Пичет кунне Шупашкарта уявлани

Майăн 5-мĕшĕнче, каçхине, Советсен çуртĕн залĕнче партипе совет тата рабселькорсен Шупашкарти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Президиумра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсем Пивоваровпа Ахазов юлташсем, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Партиллĕ Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Серов юлташ, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕсем Романова, Федоров, Енчиков, Волков юлташсем, хула Совечĕн исполком председателĕ Золотников юлташ, Чăвашпотребсоюз çумĕнчи тата Бенский юлташ директор пулса тăракан завод çумĕнчи стена хаçат редакторĕсем Давыдовпа Кац юлташсем т. ыт. те.

Пухура «Красная Чувашия» хаçат редакторĕ Вишняков юлташ «Большевикла пичетĕн вăрçă условийĕсенчи задачисем çинчен», доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх прениссем пулчĕç. Пренире Кац (Бенский юлташ директор пулса тăракан заводри стена хаçат редакторĕ), Золотов (Государство Издательствин управляющийĕ), Яковлев («Чăваш Коммуни» хаçат) тата старши политрук Громов юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем республикăри пичет ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинче чарăнса тăрса, хаçатсен малашнехи ĕçне лайăхлатма сĕнӳсем пачĕç.

Пуху доклад тăрăх тивĕçлĕ резолюци йышăнчĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 5-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пысăк улшăнусем те пулман.

Тĕрĕслесе палартнă данныйсем тăрăх, майăн 3-мĕшĕнче нимĕçсене малтан пĕлтернĕ пек 25 самолет мар, 31 самолет пĕтерсе тăкнă.

Майăн 4-мĕшĕнче нимĕçсен 12 самолечĕ пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

Майăн 4-мĕшĕнче пирĕн авиаци часĕсем нимĕçсен войскисемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 12 вагоне, зенитнăй пулеметсен 6 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи составсене çĕмĕрнĕ, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Калинин фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн часем 3 кун хушшинче çапăçусенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна ытла вĕлернĕ. Пăшалсемпе пулеметсенчен пеме нимĕçсен 8 самолетне ӳкернĕ. Трофейсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противник хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, малалла куçнă, йышăнса илнĕ рубежсем çинче çирĕппĕн вырнаçса ларнă. Нимĕçсем хăйсен сухатнă позицисене каялла тавăрас тесе, темиçе хутчен те контратакăсем тунă, анчах та вĕсене кашнинчех пысăк сухатусем кӳрсе каялла сирсе пăрахнă. Пирĕн боецсем противникăнне 5 оруди, 10 мотоцикл, 2 çăмăл автомашина, 10 лав, пĕр походнăй кухня, 15.000 граната, 2 радиостанци тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн подразделени тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапса, противник оборонин малти хĕррине татса кĕнĕ те 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ тата 12 станковăй пулемет тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Н-ски чаçăн артиллеристĕсем противникăн позицийĕсем çине аслăн пенĕ. 4 дзот çĕмĕрнĕ тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Н-ски подразделенири красноармеец-снайперсем противникăн чĕрĕ вăйне пысăк сухатусем кӳреççĕ. Вĕсем пĕр эрне хушшинче нимĕçсен 104 салтакне вĕлернĕ. Çав вăхăт хушшинче снайпер Худосовцев 14 гитлеровеца, снайпер Кадченко 10 гитлеровеца тата снайпер Турцев 9 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕсем 6 уйăх хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 900 çынна вĕлернĕ, 7 самолет, 12 танк, 85 грузовой автомашина, 21 çăмăл автомашина, 49 мотоцикл, горючи тата боеприпассен темиçе складне пĕтерсе тăкнă. Нумаях пулмасть партизансен темиçе отрячĕ, Т. юлташ командир ертсе пынипе, нимĕçсен склачĕсем çине пырса тапăннă. Склада хуралласа тăракан 37 гитлеровеца вĕлерсе хыççăн партизансем 12 тонна бензин, 2,5 тонна çу тата крахмал, 23 ешĕк хĕçпăшал тата ытти тĕрлĕ çар снаряженийĕсене сунтарнă.

* * *

Нимĕçсен 58-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 154-мĕш пехотнăй полкăн 1-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Карл Кизе çапла каласа панă: «Салтаксем нумайăшĕсем вăрçăсăр [illegible] кăшса илессе, нарядсене кайма килĕшмессĕ. Нумаях пулмасть пĕр салтака постран пăрахса кайнăшăн персе пăрахрĕç».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Ральф Румин çумĕнче вăл тăван çĕршывне яма çырса хатĕрленĕ çырăва тупнă. Унта вăл çапла çырнă: «Пирĕннисенчен кунсеренех хăшĕ те пулин леш тĕнчене ăсанать. Çавăн пек чухне эпĕ яланах паян ман черет çитмест-ши тесе шухăшлатăп. Нумаях пулмасть пирĕн пĕр ялтан тухса тармалла пулчĕ. Вырăссем пирĕн хыççăнах хăваласа пычĕç. Эпĕ аран-аран тарса ӳкрĕм. Вăрман пурри кăна çăлса хăварчĕ мана. Çавăн пек хăрушлăха тата тепре тӳссе ирттермелле ан пултărах, каллех апла шулас пулсан эпĕ халех вилме хатĕр... Ротăра 192 çынран мĕнпурĕ те 19 çын кăна тăрса юлчĕ. Ĕнтĕ мĕншĕн-ши эпир кунта Российăра вилсе пĕтетпĕр? Хăçан пĕтĕ-ши ку ылханлă вăрçă?»

* * *

Юлашки вăхăтра Германире çар заводĕсенче ĕçлекен рабочисене çара мобилизациленĕ. Çавсенчен нумайăшне çар ĕçне нимĕн вĕрентмесĕрех тӳрех фронта янă. Гитлеровецсем çав мобилизацие çапла васкаса ирттерни нимĕç войскисем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче тӳсекен пысăкран та пысăк сухатусене хăвартрах саплама кирлĕ пулнинчен тухса тăрать. Пĕлсе тăракан ушкăнсенче çапла калаççĕ: çав мобилизацие ирттернĕ чухне фашистсен пуçлăхĕсен тата тепĕр тĕллев пулнă. Хăйсен çĕршывĕнчи лару-тăру сивĕчленсе çитнĕ май, гитлеровецсем малти позицие чи малтан хальхи пурнăçпа килĕшмен, усал вăрçа хирĕç тăма пăхакан çынсене яраççĕ.

Майăн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле палла улшăнусемех те пулман.

* * *

Халăх пурăнакан пунктсенчен пĕринче (Калинин фрончĕ) урамри хаяр çапăçусенче Рудаков юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне, 2 орудине, 2 минометне, пĕр танкне пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн кавалеристсем противника халăх пурăнакан 3 пунктран хĕссе кăларнă.

* * *

Противникăн разведка тăвакан группи пирĕн Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен чаçсем вырнаçса тăнă çĕре сăрхăнса кĕме хăтланнă. Тăшманăн разведчикĕсене асăрхаса илсе, пирĕн боецсем пăшалсемпе пулеметсенчен тата минометсенчен пеме тытăннă та нимĕçсене малтанхи позициех каялла чактарнă. Çапăçу хирĕнче 60 гитлеровец вилсе юлнă.

* * *

Пирĕн боецсен группи, тăшманăн тылне шăвăнса кĕрсе, чугунçул кĕперĕ çине минăсем хурса тухнă. Противникăн çавăнтан иртсе пыракан çар эшелонĕ сирпĕнсе кайнă, 150 гитлеровец ытла вилсе тата аманса пĕтнĕ.

* * *

Орел партизанĕсен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем ларса пыракан чугунçул составне ӳпĕнтерсе янă. Тепĕр кунне партизансем тăшманăн танкне çунтарса янă тата чугунçул йĕрне 200 метр тăршшĕ взрыв туса сирпĕнтернĕ.

* * *

Аяларахра нимĕç унтер-офицерĕн Карл Кемперăн дневникĕнчен уйрăм вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«Мартăн 28-мĕш. Юлашкинчен эпир çапах та Любане çитрĕмĕр. Вагонсем пушататпăр... Çапăçура пулнă салтаксемпе калаçатпăр. Вăрçă вĕсене пурне те çавтери йăлăхтарса çитернĕ.

Апрелĕн 3-мĕш. Ирхине вырăссем вăйлăн малалла кайрĕç. Ман çывăхрах пирĕн пĕр салтак аманчĕ, тепри — вилчĕ.

Апрелĕн 7-мĕш. Ирхине йĕри-тавра лăпкăччĕ. Кăнтăрла тĕлĕнче сасартăк вырăссен артиллерийĕ пеме тытăнчĕ. Икĕ снаряд тӳрех пирĕн позицисем çине ӳкрĕ. Аманнисемпе вилнисем нумай.

Георг Берг снаряд ванчăкĕпе аманнă. Салтаксем нумайăшĕсем вилес пекех хăраса ӳкрĕç, винтовкисене пăрахрĕç те вăрманалла тарчĕç».

* * *

Нимĕçсен салтакĕ Генрих Бунде патне унăн ниччĕшĕ Петереодорфран çапла çырать: «Çуркунне кăçал кая юлса килчĕ, анчах та пирĕн ялта акана тухма васкамаççĕ. Халĕ пурне те хăйсен çĕрулмийĕсене пама хушрĕç. Лартма хăварнă çĕрулмине те илсе каяççĕ. Эпĕ нимĕн тума та пĕлместĕп».

* * *

Пирĕн боецсем малалла куçса пынă чухне йывăр аманнă Стивельбрук красноармееца тупнă. Тăна кĕрсен вăл çапла каласа панă: «Эпĕ красноармеецсен группипе пĕрле, боевой задание пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, хамăрăн чаçа таврăнма тухнăччĕ. Пирĕн çине кĕтмен çĕртен противникăн пытарса лартнă пулемечĕсем пеме тытăнчĕç. Эпĕ тата манпа пĕрле тăватă юлташ йывăр аманчĕç. Нимĕçсем пире хăваласа çитрĕç те тискеррĕн асаплантарма тытăнчĕç. Пĕр аманнă красноармеецăн пуçне гитлеровецсем прикладпа çапса çĕмĕрчĕç, 3 боеца нумайччен асаплантарса тĕпчерĕç, унтан пистолетсенчен персе вĕлерчĕç. Мана нимĕç офицерĕ хĕнесе тăкрĕ, унтан çывăхранах персе ячĕ. Эпĕ тăна çухатрăм».

* * *

Финляндири лару-тăру кунран-кун ытларах сивĕчленсе пырать. Катастрофа çывхарса килни Гитлерăн Финляндири хӳрешкисемпе тарçисене питех те шиклентерсе ӳкернĕ. Финлянди министрĕ Пеккала çак кунсенче çапла каланă: «Пирĕн экономикăллă йывăрлăхсем, уйрăмах продовольстви тĕлĕшпе, питĕ пысăк... Лартмалли çĕрулми Финляндире çукпа пĕрех. Çуракине ирттерес ĕçе пирĕн, пуринчен ытларах, ĕç вăйĕ çукки чăрмантарса тăрать. Çавна пулах йывăç юхтарас ĕç пĕтсе ларчĕ». «Вазабладет» хаçат çĕршывра «правительствăна хирĕçле вăртăн оппозици» пурри çинчен йышăнать. «Сатакуннан-Канса» хаçат мир çинчен калаçакансене хирĕç аса-çиçĕм кăларса вăрçать тата «халăх хушшинче ӳкĕнчĕклĕ шухăшсем, шанчăксăрлăхпа кăмăлсăрлăх саракан çынсене, тăшман агенчĕсене тыткаланă пекех, тыткаламалла» сĕнет.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Сурçĕр Хĕвеланăç фрончĕ). Истребительнăй отрядри красноармеец-автоматчик, комсомолец осетин Хаджимурза Заурбекович Мильдзихов нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче уйрăмăнах геройлăх кăтартнă. Мильдзихов юлташ пĕр çапăçура 108 фашиста вĕлернĕ. Пулеметран персе вăл фашистсен бомбардировщикне ӳкернĕ. Красноармеец-героя старши сержанта хуçарнă. Ăна Совет Союз Геройĕн званине панă. **Ӳкерчĕк çинче:** Совет Союзĕн Геройĕ Х. З. Мильдзихов.

Г. ПЕТРУСОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Ирсĕр ĕçсемшĕн пуриншĕн те ответ тытĕç

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, майăн 5-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Фашистсенчен хăтарнă ялсемпе хуласенче пирĕн боецсем гитлеровецсен çĕнĕрен çĕнĕ тискер ĕçĕсем çинчен пĕлеççĕ.

Пĕр ялта гитлеровецсем Бобров ятлă ватă колхознике арестленĕ, мĕншĕн тесен унăн икĕ ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăнă пулнă. Старике тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Малтан унăнне икĕ аллине тата икĕ урине касса татнă, унтан пуçне хĕртнĕ тимĕрпе çунтарнă.

Вилекен Бобров юлашки вăйне пухса палачсене ылханнă. — Маншăн сире ман ывăлăмсем тавăрĕç! — тенĕ вăл хăй вилес умĕн.

Тепĕр ялта гитлеровецсем килçуртсенчен мĕнпур пек çынсене хуса кăларнă та вĕсене вĕлерсе пĕтерме тытăннă. 7 çынна, вăл шутра 14 çулти Башкирова Валентина ятлă хĕрачана та, персе вĕлернĕ. Унтан гитлеровецсем юпа лартса ун çине вĕрлĕк хунă та, çав вĕрлĕкрен темиçе арăма тата хĕрсене çакса вĕлернĕ.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Нимĕçсен хăтланăвĕсем ахалех путланса пыраççĕ

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, майăн 5-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Фронтăн уйрăм участокĕсенче нимĕçсем çапăçăва хăйсен çуркуннехи резервĕсене йышлăн кĕртме тытăнаççĕ. Вĕсем вăрçă ĕçĕнчи пуçарăва каллех хăйсен аллине тавăрма тăрăшаççĕ, çухатнă ялсене каялла илме пăхаççĕ. Анчах та çакăн пек хăтланнисем кашни хутрах пысăк çухатусем тунипе путланса лараççĕ.

Пирĕн çирĕплетнĕ пункт çине нимĕçсем пĕр кун хушшинче тăватă хутчен контратака турĕç. Çапăçăва пехотăн икĕ батальонне тата автоматчиксен десанчĕпе пĕрле 6 танка кĕртсе ячĕç. Çапăçу хирне 260 салтакпа офицер виллине тата çĕмĕрнĕ 6 танк пăрахса хăварса, нимĕçсен каллех чакмалла пулчĕ.

Д. ЩУКИН.

Связист Викман

— Çапла, вĕсем пурте Викман пек маттурсем...— тет политрук Субботский, хăйсен ĕçĕсене хăюллăн та пултаруллăн туса пыракан связистсене мухтаса.

...Акă вăл—маттур связист Викман, хураскер, лутраскер. Çамрăк. Анчах хăйĕн ĕçне вăл лайăх вĕреннĕ, лайăх пĕлет.

Пĕр каçхине нимĕç фашисчĕсем пирĕн çыхăнăва татнă та пĕр вĕçĕмсĕр автоматсемпе персе тăнă, мина хыççăн мина ыткăнтарнă.

Каçĕ калама çук сивĕ пулнă. Тӳпере тулли уйăх тăнă. Вăл пĕтĕм таврана—ялсене, вăрмансене, уйсене çутатса тăнă. Анчах та блиндажсенче ларнă чухне—уйăх çути мĕнле усă патăр? Фрицсем пирĕн çыхăнăва татса пăснă. Пирĕн командирсене, боецсене çыхăну кирлĕ. Çыхăнусăр ĕç тухмасть.

...Телефон çыхăнуне тӳрлетме Викман каять. Нимĕçсем 200 метрта. Вĕсем переççĕ те переççĕ, пĕр çынна, совет воинне, Викман юлташа, пĕтерес тесе, темĕн чухлĕ пуля сапаççĕ, минăсем тăкаççĕ. Хăюллă связист, шлĕк таран юр ăшне путса, юр витĕр ушăленсе пырса, çыхăну линине тӳрлетет, юсать. Çак каçхине вăл 19 вырăнта çыхăнăва тӳрлетнĕ, пирĕн çыхăну вара çĕрĕпех пĕр чарăнмасăр ĕçленĕ.

Викман юлташ икĕ сехет хушши сивĕри юр ăшĕнче выртнă, çапах та вăл шăнса ĕнтĕркемен: хамăр тăван çĕршыва çыхлас шухăш ăна ăшăтса, чĕрĕ вăй парса тăнă.

Нимĕçсене улталама вăл хăйĕн çĕлĕкне патак вĕçне тăхăнтартнă та ăна юр çине лартса хăварнă. Хăй вара маййĕпен вĕтĕ хăвасем хушшипе шăвăнса каялла тавăрăннă. Нимĕç автоматчикĕсемпе снайперĕсем çав çĕлĕке уйăх çутинче [illegible] вăрманĕ хыçне анса тĕттĕмленичченех персе тăнă. Анчах патак тăрринчи çĕлĕк çаплах нимĕçсем енне пăхса тăнă. Хăйсене улталанине нимĕç фашисчĕсем ирхине тул çутăлсан тин чухласа илнĕ.

Политрук В. ДОЛГОВ (ХУТАРСЕМ).

Ленинград фрончĕ.

ХĔРАЧАСЕМ ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Турхан ялсоветĕнчи колхозсенче хĕрачасем вăрçă ĕçне вĕренеççĕ. Всевобучăн подразделенинче темиçе хĕрача 35 сехетлĕ программа тăрăх винтовкăран тĕл пеме, граната ывăтма, малтанхи пулăшу пама вĕренеççĕ.

Занятисене отечественнăй вăрçăн участникĕ лейтенант Алексеев юлташ ертсе пырать. Хĕрачасем вăрçă ĕçне юратса вĕренеççĕ.

Н. ЖАДАЕВ.

Çураки ĕçĕсенче машинăсемпе туллин усă курар

Пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ

ШАХАСАН, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Шăхасанти «Красный Октябрь» колхоз çуракине апрелĕн 30-мĕшĕнче пуçăрĕ. Пĕрмин кунра колхозниксем 25 гектар вырăнта, 20 гектар тулă, 17 гектар сĕлĕ акрĕç. Е. Семенова, М. Павлова, М. Кузьмина, П. Григорьева колхозницăсем уйăрмаллă тĕсĕмсем пăхатсса ĕçлерĕç...

[illegible]

В. ЯКОВЛЕВ.

Пуху председателĕ Эмилет Сафии колхозник çăмăк пашĕ.

— Вăрçă хуласене, — терĕ вăл, — пирĕн фронтри боецсем пек, фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем пек, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Вăйăй тырпул тухса илесси пирĕнтен килет...

[illegible]

— Майăн тăватă кун фронтра. Пĕлĕк ... тăрăшнă ...

[illegible]

Постановлени ...

[illegible]

— Суракине хăнтăрасси апата ул ... тăватăп, — тет пĕррешпи бригадăра бригадирĕ Фашвуллин ...

[illegible]

Ытти колхозниксем те çапах пек ... «Маяк» колхоз председателĕ ...

З. Минаев юлташ вăл сĕнтĕрсене ...

Халĕ колхозра хĕрÿ ĕç пуслантĕ. Фашиуллин юлташăн бригади колхоза уйăрăм участокĕн çинче суха тума тата акма ... ĕçлет. Çухасем хушшинче — кăçал 300 ĕçкунĕ тума обязательство илнĕ Эмилет Сафии юлташ те пур. Вăл пахилн кун тĕлне 85 ĕçкун туса ĕç янтă. Вăтă пулсан та вăл колхозра пĕр ĕçрен те юлмасть.

«Маяк» колхоз членĕсем, партипе правительствăн постановленийĕсене тата Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказĕне хатăланса, çураки ... в.

П. НИКОЛАЕВ.

ЧКАЛОВСКОЕ. (Хамăр корр.).

СОВЕТСКОЕ, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Районăри пур колхозсем те çуракине тухрĕç. ...

[illegible]

П. АРХИПОВ. ВКП(б) Райкомĕн секретарĕ.

КАНАШ, майăн 3-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем çуракине ... майăн 1-мĕш тĕлне 284 гектар ... 438 гектар ... 230 гектар акнă.

[illegible]

А. ДОБРОДУШЕВ.

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕНЕ ПУЛĂШМА

СЕНТЕР. (Хамăр корр.). Краснодар крайĕнчи Крупская ячĕллĕ колхоз ...

[illegible]

Çуракинчи агитаци ĕçĕ уйхирте пулмалла

СЕНТЕР. (Хамăр корр.). ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ колхозсем çуракине тухнă май агитацилле-массăллă ĕçе аванăн сарса ячĕ. ...

[illegible]

Вăрлăхсене акмалли нормăсем

Пысăк тухăçлă тырпул туса илесси ... вăрлăхăн акмалли нормине ...

[illegible]

О. ТИТОВА. ЧАССР Наркомземĕн сортлă вăрлăхсен Управленийĕн старши агрономĕ.

Англи авиацийĕ Германипе Сурçĕр Франци çине вĕçсе пырса тапанни

ЛОНДОН, майăн 5-мĕш. (ТАСС). Официаллă йĕркепе çапла пĕлтерĕç: ...

[illegible]

РОСТОК ХУЛИНЧЕ ПУЛНĂ СИЕНСЕМ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Ростока ...

[illegible]

Англи самолечĕсем Шкода завочĕсем çине вĕçсе пырса тапанни

ЛОНДОН, майăн 5-мĕш. (ТАСС). ... Пльзень ... Шкода заводсене ...

[illegible]

Тĕнĕл çĕршывĕсен çухатăвĕсем

ЛОНДОН, майăн 5-мĕш. (ТАСС). ... 147.000 тоннăллă ... 1941 ... 716.000 тонна ...

[illegible]

Венгри правительствин халăх валли розгăсемпе виселицăсем хатĕрлесçĕ

СТАМБУЛ, майăн 5-мĕш. (ТАСС). ...

[illegible]

В. М. Молотов юлташăн ноти çинчен ютçĕршывсенче мĕн калаççĕ

ЖЕНЕВА, майăн 5-мĕш. (ТАСС). Софи ... Болгари ...

[illegible]

Гитлерпа Муссолини Зальцбургра тĕл пулни

ЖЕНЕВА, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Рилма Берлинра официаллă йĕркепе çапла пĕлтерет: апрелĕн 29—30-мĕшĕсенче Зальцбургра Гитлерпа Муссолини ... тĕл пулнă ...

[illegible]

Гитлер вассалĕсем шиклеçсе ÿкнĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 1-мĕш. (ТАСС). ...

[illegible]

Совет çар çыннисем Германи тылĕнчен тарни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 5-мĕш. (ТАСС). ...

[illegible]

Май умĕн пуçланнă ăмăрту малалла пырать

СЕМВРЕЛЕ, майăн 6-мĕш. (Телефонпа). Комбинатра пур рабочисем те Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказне ...

[illegible]

И. ПОДКЛЕТНОВ. Комбинатри партбюро секретарĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕн приказне 100.000 экземпляр тиражпа кăларнă

Оборона Халăх Комиссарĕ И. Сталин юлташăн 1942 çулти майăн 1-мĕшĕнчи приказне Чăваш АССР Государство Издательстви ... пурĕ 100.000 экземпляр тиражпа кăларчĕ. ...

[illegible]

ĔÇ ДИСЦИПЛИНИНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИШĔН

СЕНТЕР, майăн 6-мĕш. (Телефонпа). ...

[illegible]

Г. АНИМОВ.

СССР Наркомздрав госпиталĕсен Совечĕн пĕрремĕш пленумĕ

Майăн 5-мĕшĕнче СССР Наркомздрав ...

[illegible]

Пленум тĕмине пуçа çавăрса ... (ТАСС).

СИМĔС СУХАН СУТĂÇÇĔ

УЛАТАР. Сталин ячĕллĕ тĕрлĕ колхоз ...

[illegible]

Т. НИКИТИН.

ХРОНИКА

РОФСР Верховнăй Совет Президиумĕ Д. А. Пешков юлташа РОФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательн çумĕ пулма ...

РОФСР Верховнăй Совет Президиумĕ Д. Д. Лазарев юлташа РОФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ...

РОФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ... И. С. Хохлов юлташа ...

[illegible]

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ ЭРЕХ ЗАВОДНЕ

катка-пичке тума тата киввисене юсама та пĕлекенсем

ВАСКАВЛĂН КИРЛĔ

Ĕçукн—калаçса татăлнă тăрăх. Хваттер—общежитире. Столовăйра апат çитерççĕ. Тĕплĕнрех çак адреспа мĕтсе пĕлмелле: Шупашкар хули, Чувашская урам, 61, эрех завочĕ, заводăн главнăй инженерĕ.

КОЗЛОВСКИЙ КОМБИНАТ

на Волге принимает в расчиловку лес в неограниченном количестве от организаций и колхозов. Возможно с последующей обработкой (стружка, шпунтовка). Телеграфный адрес: Козловка ЧАССР Волга ЗАВОДОУПРАВЛЕНИЕ.

Чувашскому тресту «РОСГЛАВХЛЕБ» требуется главный бухгалтер. За справками обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 6. Телефон № 7—93

ИВАНОВСКОМУ ГОСУДАРСТВЕННОМУ КИРПИЧНОМУ ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ на постоянную работу: главные бухгалтера, бухгалтера, плановик. Квартирой обеспечиваются.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 488 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 266. Ф. 6. 58 64